**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

**Министерство образования и молодёжной политики Чувашской Республики**

**Отдел образования и молодёжной политики администрации Вурнарского муниципального округа**

**МБОУ "Санарпосинская СОШ"**

| РАССМОТРЕНО | СОГЛАСОВАНО | УТВЕРЖДЕНО |
|---|---|---|
| Руководитель ШМО учителей начальных классов ________ Краснова И.В. | Заместитель директора по УВР ________ Евдокимова О.Н. | Директор ________ Малов В. И. |
| Протокол №1 от «30» 08 2023 г. | «30» 08 2023 г. | Приказ №64-О от «30» 08 2023 г. |

**РАБОЧАЯ ПРОГРАММА**

**учебного предмета «Родной(чувашский язык)»**

для обучающихся 1 – 4 классов

**Новые Яхакасы 2023**

**Предметăн шалашĕ (содержанийĕ)**

**1 класс**

Хутла вĕренес ĕç виçĕ тапхăртан тăрать: вулама-çырма вĕрентес умĕнхи, вулама-çырма вĕрентмелли, вулама-çырма вĕрентнĕ хыççăнхи.

**Вулама-çырма вĕрентес умĕнхи тапхăрăн шалашĕ (*12сехет).***

***Вулама вĕренме хатĕрлесси.*** Пуплеве тимлĕн итлесси, сăнасси, ăнланасси, тишкересси: пуплеври предложенисене, предложенири сăмахсене, сăмахри сыпăксене, сыпăкри сасăсене уйăрасси, сасăсене тĕрĕс каласси. «Калав», «предложени», «сăмах», «сыпăк», «пусăм», «сасă», «хупă сасă», «уçă сасă» терминсемпе палашасси, вĕсемпе майĕпен пуплев тишкерĕвĕнче усă курасси. Кĕнекери калавсен, предложенисен, сăмахсен схемисене, уçă тата хупă сасăсене уйăрмалли паллисемпе (хĕрлĕ çаврашка, кăвак тăваткал) паллашасси, вĕсемпе усă курасси.

«Шкул», «Класра», «Теттесемпе вăйăсем», «Шкул ачин кун йĕрки», «Тăван ял. Тăван кил-çурт», «Çемье», «Килти выльăх-чĕрлĕх», «Улма-çырла.Пахча çимĕç», «Уй-хирти тыр-пул», «Вăрманти чĕр чунсем», «ӳт-пӳ пайĕсем», «Çарăк (юмах)» темăсемпе пĕр-пĕринпе калаçасси, ыйтусем парасси, хуравласси, пĕччен, е икшерĕн, е ушкăнпа çыхăнуллă калав йĕркелесси.

Куç умĕнчи, ӳкерчĕксенчи япаласем çинчен, çывăхра пулса иртекен ĕçсемпе пулăмсем çинчен калаçасси, вĕсем çинчен ыйтса пĕлесси, ыйтусене хуравласси, хатĕр планпа çыхăнуллă пĕчĕк калав тăвасси.

Сăвă пăхмасăр вĕренесси, сăвă содержанийĕ тăрăх вĕçе-вĕçĕн пĕр-пĕрне ыйтусем парса хуравласси, сăвăран кирлĕ сăмахсене тупасси, сăвăри йĕркесемпе усă курса пĕр-пĕр япалана, пулăма сăнласа парасси.

***Çырма вĕренме хатĕрлесси***. Çырнă чухне тĕрĕс ларасси, çыру хатĕрĕсемпе усă курасси. Çыру тетрачĕн страницисенче ĕç йĕркине, унăн варрине (çуррине), хушма йĕре курасси, çырнă чухнехи ал хусканăвĕсене (çӳлтен аялалла, аялтан çӳлелле, сулахайран сылтăмалла, сылтăмран сулахаялла) класпа, ретĕн-ретĕн, икшерĕн, пĕччен тăвасси. Ĕлкесене палласа илесси, пĕр-пĕринчен уйăрасси. Чăваш алфавитĕнчи сас паллисен 9 пайĕпе (тӳрĕ йĕр, çекĕл, авăнчăк чалăш йĕр, çурма ункă, ункă, икĕ вĕçлĕ çекĕл, хупă çекĕл, йăлăллă тӳрĕ йĕр, йăлăллă çекĕл) паллашасси, вĕсене мĕнле çырмаллин йĕркине пĕлесси, çырасси, пĕрне-пĕрин ĕçĕсене тăрĕслесси, хакласси, йăнăш тупсан, мĕнле тӳрлетмеллине ăнлантарасси. Сас паллисен элеменчĕсене танлаштарасси, пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсене асăрхасси, вĕсене ытти йĕрсем хушшинче шыраса тупасси.

Япаласем хушшинче ытлашшине тупасси, мĕншĕн ытлашши пулнине ăнлантарасси. Пĕр-пĕр япала хатĕрлеме мĕн-мĕн кирлине суйласа илесси,çитменнине хушасси. Тума пуçланă ĕçе вĕçлесси.

**Вулама-çырма вĕрентмелли тапхăрăн шалашĕ (90 сехет).**

*Вулама вĕрентесси.* Сăмахри (сыпăкри) сасăсене пĕр-пĕринпе сыпăнтарма вĕренесси. Сăмахри сыпăксене тишкересси, сыпăк миçе сасăран тата мĕнле сасăсенчен тăнине, сыпăкри сасăсен вырăнне палăртасси. *А, у. н, ă, л, х, м, р, ш, ы, в, с, ç, п* сас паллисемпе паллашасси, вĕсемпе усă курса тӳнтер тата тӳрĕ сыпăксене, сăмахсене уласси. *И, т, к, э, е(э), ĕ, ӳ, ч* сас паллисемпе, çемçелĕх паллипе*(ь)* паллашасси, пăзициллĕ вулав вăрттăнлăхне ăнкарасси, хытă тата çемçĕ хупă сасăллă сыпăксемпе сăмахсене танлаштарасси, вĕсене сас паллисемпе çырса тĕрĕс уласси. Сингармонизм сакунне пăхăнман сăмахсене вуласси. *Й, е(йэ), ю(йу), я(йа)* сас паллисемпе, уйăракан паллăпа *(ь)* палашасси. *Й* хупă сасăпа тата вĕреннĕ уçă сасăсемпе усă курса тӳрĕ сыпăксем тăвасси, *йэ, йу, йа* сасăсен пĕрлешĕвĕсене çĕнĕ сас паллисемпе *(е, ю, я)* паллă тунине, *е, ю, я* сас паллисем икĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланасси. У, ХУ, УХ, ХУХ, УХХ, ХХУ, ХУХХ, ХХУХ сыпăксене, вĕсенчен тăракан сăмахсене уйрăмлăхĕсене пĕлсе вулама вĕренесси. Сас паллисене, сыпăксене, сăмахсене танлаштарасси. Сăмахсене каялла, юлашки икĕ сас паллине ылмаштарса, сас палли хушса, пĕр сас паллине тепĕр сас паллипе улăштарса вуласси. Тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе предложенисем тăвасси, пĕлтерĕшĕсене ăнлантарасси.

*Çырма вĕрентесси.* Чăваш афавитĕнчи сас паллисене, вĕсене ытти сас паллисемпе çыхăнтарса çырасси. Сас палли çырас йĕркине ăнлантараса курăмлă кăтартасси, тишкересси (миçе тата мĕнле пайсенчен, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăннă). Сас паллисене çыхăнтармалли йĕрке, çав йĕркене астуса юласси. Çĕнĕ сас паллине малтан вĕреннĕ сас паллисемпе çыхăнтармалли мелсене кăтартасси, вăл ытти сас паллисем умĕнче те, хыçĕнче те тăма пултарнине шута илесси. Çĕнĕ сас паллине вĕреннĕ сас паллисемпе сыпăкра, сăмахра, предложенире сыпăнтарса çырасси. Çыхăнуллă пуплеме вĕренесси, тăван чĕлхен тытăмĕпе (текст, предложени, сăмах майлашăвĕ, сăмах, сыпăк, сасă) паллашасси, сăмахсене тĕрĕс калама, пусăма тĕрĕс палăртма вĕренесси. Текстсене, предложенисене, сăмахсене, сыпăксене, сасăсене çыру тетрадĕнче схемăсемпе тата модельсемпе кăтартасси. Виçĕ шайлă схемăсемпе (çӳлти пайĕнче – ӳкерчĕкри япалана пĕлтерекен сăмахăн сасă тытăмĕ, вăтам шайĕнче – пичет, аялта çыру сас паллийĕсемпе çырнă сăмахсем) ĕçлесси. Вĕреннĕ сас паллисене аса илессипе, кашни сас паллин ĕлкине астуса юлассипе, вĕреннĕ сас паллисене ушкăнлассипе, ачасене шухăшлав мелĕсемпе (тишкерме, танлаштарма, пĕтĕмлетме тата ытти те) паллаштарассипе, вĕсемпе усă курма вĕренессипе çыхăннă логика ĕçĕсене пурнăçласси. Сас паллин пайĕсене палăртса, пĕр пек пайĕсене кăтартса, пĕр пек мар пайĕсене тупса, пĕр пек пайĕсене калăпăш, шучĕ, ăçта тата мĕнле вырнаçни енчен сăнаса икĕ сас паллине танлаштарасси.

Çак йĕркепех сас паллисене ушкăнланă чухне усă курасси. Пĕр-пĕр сас паллин пайĕсене ытти сас паллисенче тупасси. Сасăсене илтес, уйăрас пултарулăха, вĕреннĕ сас паллисене çырас, вĕсене сыпăксенче, сăмахсенче тата предложенисенче çыхăнтарас ансат хăнăхусене аталантармалли хăнăхтарусем, çырса илмелли ĕçсем пурнăçласси. Сас паллине çырас йĕркин алгоритмне тăвасси, унпа усă курасси.

**Вулама-çырма вĕрентнĕ хыççăнхи тапхăрăн шалашĕ (30 сехет)**

*Текстпа çыхăннă ĕçсем.* Çут çанталăк, çулталăк вăхăчĕсем, çемье, чĕр чунсем, ачасен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă текстсене тишкерме вĕренесси. Текст ячĕ тăрăх текст содержанийĕ çинчен калаçасси. Çĕнĕ тата йывăр сăмахсене ăнланасси. Текст темипе паллашасси, калаçасси. Текст темипе килĕшӳллĕ хăйсем курни-илтни, пĕлни çинчен калаçасси. Текста пайăн-пайăн вуласси, план тăвасси. Текст содержанийĕ тăрăх калаçасси, тĕп шухăшне палăртасси. Творчествăллă ĕçсем (пăтраштарса панă плана йĕркипе вырнаçтарасси, содержани тăрăх ӳкересси, ӳкерчĕксенчен диафильм йĕркелесси, инсценировка,сăмахлă ӳкерчĕк тăвасси, текста малалла тăсасси тата ытти те) пурнăçласси. Текстсен содержанийĕпе килĕшӳллĕ ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсемпе, тупмалли юмахсемпе ĕçлени. Сăвăпа ĕçлес йĕркепе паллашсси, ăна пурнăçласси. Сăвва пăхмасăр вĕренесси. Чăваш сăмахĕсен пулу мелĕсене, йĕркине ăнкарма сĕмленесси.

*Тĕрĕс çырма вĕренмелли ĕçсем.* Сăмахсене пĕтĕмĕшле курма вĕренесси, вĕсене мĕнле çырнине асра тытма хăнăхасси. Вĕреннĕ пур сас паллисене тепĕр хут аса илесси, элеменчĕсене кура вĕсене ушкăнласа çырасси. Сас паллисенче панă элемента тупса йĕрлесси. Пĕр пек элемент пур сас паллисене çырса илесси. Панă сас паллин элеменчĕсене ытти сас паллисенче тупса йĕрлесси. Панă элементсемпе усă курса сас паллисем çырасси. Алăпа çырнă тата пичетленĕ сăмахсене, предложенисене, 2-3 предложенирен тăракан текста пăхса çырса илесси, çырнине çыру тетрадĕнчи текстпа танлаштарса тĕрĕслесси. Сăмаха е предложение, текста вĕрентекенпе пĕрле тишкересси, унтан вĕрентекен вуланă тăрăх çырасси, çырнине пăхса тĕрĕслесси. Пăтраштарса панă сас паллисенчен сăмахсем, сăмахсенчен предложенисем, предложенисенчен текстсем туса çырасси. Пăнчăсем вырăнне сăмахра кирлĕ сас паллисем, предложенисенче кирлĕ сăмахсем лартса çырасси. Ыйтусене хуравласа çырасси. Пăхмасăр çырма хатĕрленесси.

**2 класс**

**1-мĕш класра вĕреннине аса илни**

Предложени, сăмах, сасă, сас палли.

**Сасă тата сас палли**

Алфавит. Уçă сасăсемпе хупă сасăсем. Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсем. Хытă хупă сасăсемпе çемçе хупă сасăсем. Сывлăх сунасси.

Сывпуллашасси.. Хытă уçă сасăллă сăмахсенче çемçелĕх палли (ь) çырасси. Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси. Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртни. Тăван-хурăнташлăх сăмахĕсем. Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене çырасси. Сăмах сыпăкĕ. Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси.

**Сăмах. Япала ячĕ**

Кам? мĕн? ыйтуллă сăмахсем. Пĕр япалана пĕлтерекен сăмахсем. Япала нумайййине пĕлтерекен сăмахсем. Çын ятне, хушаматне, ашшĕ ятне пысăк сас пал-линчен пуçласа çырасси. Паллашу сăмахĕсем. Выльăх-чĕрлĕх ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. Ӳкерчĕк тăрăх калав йĕркелесе çырасси. Выльăх- чĕрлĕх ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси.Вĕреннине çирĕплетесси. Хула, ял, юхан шыв ячĕсене пысăк сас пал-линчен пуçласа çырасси. Пĕлтер□ырасси.

**Глагол**

Мĕн тăвать? Мĕн тăваççĕ? ыйтури глаголсем. Мĕн турĕ? мĕн турĕ□? ыйтусенчи глаголсем. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем (антонимсем). Çывăх пĕлтерĕшлĕ глаголсем (синонимсем). Тав тăвасси.

**Паллă ячĕ**

Япала паллине пĕлтерекен сăмахсене мĕнле? ыйту лартса тупасси. Тĕсе пĕлтерекен сăмахсем. Çынна сăнлакан сăмахсем. Çыру çырасси. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (антонимсем). Пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем(синонимсем).

**Предложени**

Пуплеве предложенисем çине уйăрасси. Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем. Калуллă предложенисем. Ыйтуллă предложенисем. Кăшкăруллă предложенисем.

**2-мĕш класра вĕреннине пĕтĕмлетесси**

Сасăсемпе сас паллисем, алфавит çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси. Япала ячĕ.

Глагол. Паллă ячĕ. Предложени.

Мĕн вĕрентнине шута илсе, вулав урокĕсемпе тачă çыхăнтарса ачасен çыхăнуллă калаçас, тăнласа ăнкарас, вулас тата çырас мехелĕсене малалла аталантармалла. Вуламалли, тăнламалли, çыхăнуллă каласа памалли, калаçăва хутшăнмалли, çырмалли хăнăхтарусем çине таянса вĕсемпе çыхăнуллăн чĕлхе тытăмĕн тĕрлĕ сийĕпе (фонетика, лексика, морфологи, синтаксис, стилистика) усă курма пĕлнине лайăхлатмалли хăнăхтарусем

куллен йĕркелемелле. Вулаттарнă, пуплеве тăнлаттарнă, çыхăнуллă пуплев тутарнă, çыртарнă май вĕренекенсене чĕлхен тĕрлĕ енĕсене (аспекчĕсене) ансат тишкерме, чĕлхе ăслăлăхĕн кирлĕрех терминĕсемпе, янтă пĕлĕвĕсемпе усă курма вĕрентмелле.

**Çыхăнуллă пуплев**. Пуплевĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ.

Текст. Ăна темăпа çыхăнман предложенисен пуххипе танлаштарасси. Текстра мĕн çинчен каланине (текст темине) палăртасси. Текста темиçе сыпăка (пая) уйăрасси. Пысăках мар текста, унăн пайĕсене ят парасси.

Ӳкерчĕксемпе ĕçлесси. Ӳкерчĕксем тăрăх ыйтусене хуравласси, предложенисем тăвасси. Вĕсене çырасси.

И з л о ж е н и  ç и н ч е н  ă н л а н т а р а с с и . Ыйтусене ушкăнпа хуравланă, йывăр орфограммăсене асăрхаттарнă хыççăн вĕрентӳçĕ пулăшнипе 30-45 сăмахлă текст тăрăх изложени çырасси.

Ачасен пурнăçĕпе çыхăннă темăсемпе (вăйă выляни, вăрмана экскурсие кайни, кама та пулин пулăшни, шкул çинчен) 4-5 предложенирен тăракан пĕчĕк калав тăвасси.

**Пуплев этикечĕ**. Сывлăх сунни. Сывлăх суннă чух усă куракан тараватлăх сăмахĕсемпе сăмах майлашăвĕсем. Паллашу сăмахĕсемпе предложенисем. Сăпайлăн тав тума пĕлесси. Сыв пуллашу сăмахĕсем.

**Ĕç хучĕсем**. Ансат пĕлтерӳ хайласси. Юлташ патне çыру çырасси.

**Чĕлхене ансат тишкересси, терминсемпе усă курасси**

**Алфавит**. Саспаллисен ячĕсем тата йĕрки. Уçă тата хупă сасăсем. Хытă тата çемçе сасăсем.

Пĕр-пĕр саспаллипе пуçланакан сăмахсене словарьте шыраса тупма вĕрентесси. Сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма хăнăхтарасси (пуçламăш саспалли тăрăх).

**Япалана пĕлтерекен сăмахсем**. Вĕсене кам? тата мĕн? ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсем**. Вĕсене мĕн тăвать? мĕн тăвĕ? мĕн турĕ? ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япалан тата унăн ĕçĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем**, вĕсене мĕнле? ыйту тăрăх тупасси.

**Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнласси**. Хирĕçле _пĕлтерĕшлĕ сăмахсем (хура - шурă, пысăк - пĕчĕк, сарлака - ансăр, пылак -

йӳҫӗ). ҫывӑх пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем: васка - хыпалан, кил - пыр, усал - хаяр, аван - лайӑх, илемлӗ - хитре, чипер.

**Лексикӑпа тематика ушкӑнӗсем**: а) тӗс ячӗсем (хӗрлӗ, сарӑ, шурӑ, хура, хӑмӑр, кӑвак т.ыт.те; ҫӳрен, турӑ, хӑла, ула, сарӑ-хӑла (лаша ҫинчен); ӑ) ҫынна хаклакан сӑмахсем (чипер, илемлӗ, тирпейлӗ, тӑрӑшуллӑ, ӗҫчен, кахал, наян, мӑнтӑр, начар т.ыт.те).

**Предложени**. Пуплеври предложенисене уйӑрасси (маларах вӗреннине ҫирӗплетесси). Предложенин тӗп (подлежащипе сказуемӑй) тата кӗҫӗн членӗсем (ячӗсене асӑнмасӑр).

Тӗрлӗ калӑплӑ (тытӑмлӑ) предложенисем тума тата ҫырма хӑнӑхтарасси. Вӗсене (кам? мӗн? камӑн? мӗнӗн? кама? мӗне? камра, мӗнре? камран? мӗнрен? кампа? мӗнпе? камсӑр? мӗнсӗр? камшӑн? мӗншӗн?) ыйтури сӑмахсемпе анлӑлатасси.

**Пунктуаци**. Предложени вӗҫне пӑнчӑ, ыйту тата кӑшкӑру паллисем лартасси.

**Орфографи**. 1) Хытӑ уҫӑ сасӑллӑ сыпӑк е сӑмах вӗҫӗнчи [л'], [н'], [т'] сасӑсене л, н, т саспаллисем хыҫҫӑн ҫемҫелӗх палли (ь) ҫырса палӑртасси: выльӑх, кукӑль, супӑнь, мӑкӑнь, халь, ахаль, мӑкӑль, шукӑль, ларать, вылять, чупать, тӑрӑшать.

2) Уйӑракан ҫемҫелӗх палли (ь) ҫырасси: мӑрье, кӗсье, тухья, Марье.

3) Вӑрӑм хупӑ сасса икӗ пӗр пек саспаллипе палӑртасси: ӑру-тӑванлӑх сӑмахӗсенче: атте, анне, асатте, шӑллӑм, аппа, кукка, мӑн акка;

Ҫулталӑк вӑхӑчӗсен ячӗсенче: ҫулла, хӗлле, кӗркунне, ҫуркунне;

хальхи вӑхӑтри нумайлӑ хисепри 3-мӗш сӑпатри глаголсен формисенче: вулаҫҫӗ, вуламаҫҫӗ, выляҫҫӗ, вылямаҫҫӗ.

4) Сӑмаха пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куҫарасси : ма-ши-на, вы-ля, япа-ла, пӗ-лӗт-сем.

5)Ҫын ячӗпе хушаматне тата ашшӗ ятне, выльӑхсемпе чӗр чунсен уйрӑм ячӗсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячӗсене пысӑк саспаллирен пуҫласа ҫырасси: Иванова Мария Васильевна, Михайлов Иван Викторович, Кампур, Улайкка, Аньяр, Хураҫка, Канаш, Шупашкар, Шурча, Ҫавал, Кӗҫӗн Ҫавал, Атӑл, Сӗве

6) Вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ хӑш-пӗр сӑмахсене вырӑс чӗлхинчи пекех ҫырасси: а) Миша, Наташа, Коля, Петя, Таня; ӑ) машина, трактор, комбайн,

завод, фабрика, самолёт, ракета; б) парта, учитель, директор; в) колхоз, ферма, сад, дыня, помидор;

г) кухня, стакан, щётка.

**Таса та илемлĕ çырасси**

Çыру гигиени хăнăхăвĕсене (тĕрĕс ларма, тетраде хума, ручкăна тытма т.ыт.те пĕлнине) çирĕплетесси.

Пĕчĕк саспаллисене йывăрлăх енчен ушкăнласа (5 ушкăн) çырасси: 1) и, ш, г, п, т, й, н, р, у, ӳ; 2) л, м, ц, щ, ь, ы; 3)а, ă, ю, ф, д, б, я; 4)с, ç, е, ĕ,ё, ч, ъ , в; 5) э, х,ж, к.

Пысăк саспаллисене йывăрлăх енчен ушкăнласа (4 ушкăн) çырасси: 1) Й, И, Ш, Ц, Щ, Ч, Ы, Л, М, А, Ă.

2)О, С, Ç,Х, Е,Ё,,Ĕ, З, Э, Я;

3)Ж,У,Ӳ,Н, К, Ю, Р, В, Ф; 4) Г, П, Т, Б, Д.

Таса та илемлĕ, тĕрĕс çырмалли сăмахсем: алсиш, анне, аппа, асатте, атте, ăмăрт кайăк, библиотека, больница, выльăх, вырсарни кун, герой, дежурнăй, ешчĕк, ёлка, журнал, йăмăк, кĕçнерни кун, кĕркунне, кĕсье, класс, класра, колхоз, коньки, комбайн, комбайнер, кукамай, кукаçи, кукка, лётчик, майка, мунча, пан улми, пичче, ракета, самолёт, çулла, çуркунне, тăвайкки, тетрадь, трактор, тунти кун, тырпул, улмуççи, учитель, учительница, ӳхĕ, физкультура, хĕлле, чăх-чĕп, шăллăм, шăмат кун, щётка, ытлари кун, эрне кун, юлан ут, юн кун, ялав.

**3 класс**

**2-мĕш класра вĕреннине аса илесси**

Текст

Предложени. Çырса илни Сăмах. Творчество ĕçĕ. Виçĕ кушак çури.

Сасăсемпе сас паллисем

Сасă. Сас палли

**Сасă, сас палли - Пуплев этикечĕ**

Сăмах вĕççĕн е çыру çырса хăнана чĕнесси, саламласси. Сăпайлăх сăмахĕсемпе усă курасси. Телефонпа калаçасси.

**Ĕç хучĕсем**.

Класри е шкулти хаçата заметкăсем çырасси. Библиотекăран илсе вуланă кĕнекесен списокне туса пыма пĕлесси.

Вăрăм хупă сасăсене икĕ сас паллипе палăртасси

Вăрăм хупă сасăсене икĕ сас паллипе палăртасси

Укерчĕк тăрăх калав йĕркелесе çырасси

Ч сасă умĕнчи л, н хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни

Сăпайлăх сăмахĕсем

Сăпайлăх сăмахĕсем

Ç, ч сас паллисем хыççăн ы е и çырасси
Калав содержанине кĕскен çырасси
Ç, ч сас паллисем хыççăн ы е и çырасси
Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче б,г,д,ж,з, ф, ц, щ, сас паллисем çырасси
Телефонпа калаçасси
Э, е, ё, ю, я сас паллисемпе усă курма пĕлесси
Библиотекăран илнĕ кĕнекесен списокне тăвасси

**Предложени.**

Калуллă, ыйтуллă тата хистевлĕ предложенисем. Кăшкăруллă предложени. Предложенин тĕп членĕсем --- подлежащипе сказуемăй. Предложенин кĕçĕн членĕсем. Предложенисене кĕçĕн членсемпе анлăлатасси.
Предложени çинчен мĕн пĕлнине аса илесси
Текст тата предложени
Калуллă предложенисем.
Ыйтуллă предложенисем
Хистевлĕ предложенисем
Кăшкăруллă предложенисем
Предложенин тĕп членĕсем
Предложенин кĕçĕн членĕсем
Сăмах майлашăвĕ. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ
Ансăр тата анлă предложенисем
Чĕр чуна сăнласа текст çырасси
Предложени çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни

**Сăмах.**

Сочинени тишкерĕвĕ. Сăмах тытăмĕ. Тымар тата аффикссем
Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссем
Хăнана чĕнесси
Çĕнĕ сăмахсем çă (-çĕ), -лăх (лĕх) аффикссем хушăнса пулни
Çĕнĕ сăмахсем –у(ӳ), -лă (-лĕ), -ла (-ле) аффикссем хушăнса пулни
Пĕр тымартан пулнă сăмахсем
Аффикслă сăмахсене тĕрĕс çырасси

**Пуплев пайĕсем. Япала ячĕ**.

Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем. Япала ячĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче пулни. Вĕсем ытти сăмахсемпе çыхăннă чухне тĕрлĕ аффикс йышăнни, **ӳкĕм** (падеж) термина асăнмасăр вĕсен ыйтăвĕсемпе аффиксĕсене пăхса тухни.
Камăнлăх аффиксĕсем йышăннă япала ячĕсем тĕп мар падежри пĕрреллĕ хисепри (терминсене асăнмасăр) формисемпе пуплевре усă курасси (аттеме, аттемпе, аçуна, ашшĕне, ашшĕпе т.ыт.те).

**Япаласен хисепне пĕлтерекен сăмахсем** (пĕрре, иккĕ, саккăр, вуннă, пĕрремĕш, иккĕмĕш, çиччĕмĕш, вуннăмĕш).
Япала ячĕ. Япала ячĕн пĕлтерĕшĕ тата ыйтăвĕ
Япала ячĕсем хисеп тăрăх улшăнни

Ш, с, ç сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсене нумайлă хисепре тĕрĕс çырасси

**Глагол.**

Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Глагол вăхăчĕсем: хальхи вăхăт, пулас вăхăт, иртнĕ вăхăт (кайрăм, илтĕм, вулар, пĕлчĕ).
Глагол пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем
Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем
Çывăх пĕлтерĕшлĕ глаголсем
Глагол улшăнăвĕ
Хальхи вăхăт
Иртнĕ вăхăт
Пулас вăхăт

**Паллă ячĕ.**

Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Вăл япала ячĕпе тата глаголпа çыхăнни. Япала ячĕпе тата глаголпа çыхăннă паллă ячĕсем вĕçленменни. Пĕрешкел е çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (илемлĕ, капăр, хитре, чипер).
Паллă ячĕсен пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем
Паллă ячĕ улшăнманни
Паллă ячĕ япала ячĕпе тата глаголпа çыхăнни
Çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем
Çулĕпе аслăрах çынсене хисеплесе чĕнесси
Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем

**3-мĕш класра вĕреннине аса илсе çирĕплетесси**

Сасăсемпе сас паллисем аса илесси
Вĕренекенсен пĕлĕвне тĕрĕслени
Сăмах тытăмĕ
Пуплев пайĕсем

**Тымар тата аффикссем.** Сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссем. Япалана пĕлтерекен сăмахсем çумне *–çă(-çĕ), -лăх(-лĕх), -у(-ӳ)* аффикссем хушăнса пулнă сăмахсене сăнасси. Пĕр тымартан пулнă сăмахсене асăрхаса ушкăнласси, аса илсе каласси, çырасси *(çыр –çыру – çырулăх, кшш – калав –калавçă).*

**Япала ячĕ.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем. Япала ячĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче пулни. Вĕсем ытти сăмахсемпе çыхăннă чухне тĕрлĕ аффикс йышăнни, ӳкĕм (падеж) термина асăнмасăр вĕсен ыйтăвĕсемпе аффиксĕсене пăхса тухни.
Камăнлăх аффиксĕсем йышăннă япала ячĕсем гĕп мар падежри пĕрреллĕ хисепри (терминсене асăнмасăр) формисемпе пуплевре усă курасси *(аттеме, аттемпе, аçуна, ашшĕне, ашшĕпе* т.ыт.те.
**Глагол.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Глагол вăхăчĕсем: хальхи вăхăт, пулас вăхăт, иртнĕ вăхăт.

**Паллă ячĕ.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Вăл япала ячĕпе тата глаголпа çыхăнни. Япалаячĕпе тата глаголпа çыхăниă паллăячĕсем вĕçленменни. Пĕрешкел е çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем *(илемлĕ, капăр, хитре, чипер).*
**Предложени.** Калуллă, ыйтуллăтата хистевлĕ предложенисем. Кăшкăруллă предложени. Предложенин тĕп членĕсем — подлежащипе сказуемăй. Предложенин кĕçĕн членĕсем. Предложенисене кĕçĕн членсемпе анлăлатасси.
**Орфографипе орфоэпи.** Э, *е, ă, ю, я* сас паллисемпе усă курма пĕлесси. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче *б, г, д, ж, з, ф, ц, щ* сас паллисене тĕрĕс вулама, çырма пĕлесси.
Сăмах тĕпĕнчи вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртасси: а) *çăрттан, паттăр, параппан, суккăр, маттур, тăвайкки, тĕттĕм, туршкке;* ă) *пĕрре, иккĕ, виççĕ, пшлĕк, çиччĕ, аллă:* б) *ачашшт, хуллен, вăрттăи, пысăккăн, симĕссĕн, шуррăн; в) вапли, хыççăн.*
Хутăш сăмахри ч умĕнчи [л'], [н'] хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни: калча, мунча, пăнчă, вăлча, анчах, хупăлча.
*Ç, ч* сас паллисем хыççăн *ы* е *и* çырасси: а) *çыру, çын, çырма, чылай, чыс, çывăх, çырла;* ă) *çимĕç, чикĕ, читлĕх, çинче.*
Уçă е [л] сасăпа пĕтекен сăмах тĕпĕçумне *–лă(-лĕ), -ла(-ле)* аффикссем хушăнса пулнă сăмахсенче икĕ пĕр пек сас палли (лл) çырасси: *а)паша— лашалла, ĕне — ĕнелле, футбол — футболла, лап-та-лапталли, пукане — пуканелле, шашка — шашкăлла;* ă) *сухач — сухаллă.*
Нумайлă хисеп аффиксĕнчи [с] сасса (вăл умĕнхи [ш], [ç] сасăсемпе пĕрпекленнĕ тĕслĕхсем) тĕрĕс палăртасси: *юлташсем, тантăшсем, чăрăшсем, лĕпĕшсем, чĕкеçсем.*
Хальхи вăхăтри пĕрреллĕ хисепри глаголсене тĕрĕс каласси, çырасси: *ташлатăп, вĕренетĕп, ĕçлетĕп, юрлатăп, вĕренетĕн, ĕçлетĕн, ташлатъ, юрлатъ, вĕренет, ĕçлет.*
**Таса та илемлĕ çырасси**
Çыру гигиенин хăнăхăвĕсене çиреплетесси. Пĕр йĕр тăрăх çырма хăнăхтарасси. Кăткăс ĕлкеллĕ сас паллисемпе вĕсен çыхăнăвĕсене хăвăртрах, таса та илемлĕ çырасси.

**4 класс**
**Çĕрĕм-шывăм, Чăваш çĕрĕ-шывĕ**
Çĕрĕм-шывăм, Чăваш çĕрĕ -шывĕ
**Вĕреннине аса илесси. - 6 ч**
Вĕреннине аса илесси. Текст. Предложени. Сăмах. Сасăсем тата сас паллисем. Сыпăк. Пусăм
Хутшăну йăли-йĕрки. Этикет
**Сăмах тытамĕ тата пулăвĕ – 8 ч**
Сăмах тытăмĕ тата пулăвĕ. Пĕр тымарлă сăмахсем. Сăпайлăх сăмахĕсем. Сăмах аффикс хушăннипе пулни. Мăшăр сăмахсем. Сăмахсене икĕ хут каланине тишкересси
Çыру тата пĕлтерӳ çырасси

**Текст – 4 ч**

Текст. Текстри предложенисен килĕшĕвĕ. Текст темине, тĕп шухăшне тупни. Текст тытăмĕ

**Предложенин пĕр йышши членĕсем - 6 ч**

**Предложени**. Предложенин пĕр йышши членĕсем. Вĕсем пĕтĕçтерӳпе (союзпа) (анчах, çапах, тата, та(те) тата пĕтĕçтерӳсĕр (союзсăр) çыхăнни.

Пĕр йышши членлă предложенисем тума пĕлесси.

**Пуплев пайĕсем - 2 ч**

Сăмахсене пĕлтерĕш тăрăх ушкăнлани

Пуплев пахалăхĕ

**Япала ячĕ - 10 ч**

**Япала ячĕ**. Ӳкĕмсем (падежсем). Текстри, предложенири япала ячĕсем мĕнле падежрине вĕсен ыйтăвĕсем тăрăх пĕлесси. Хупă сасăпа (юлташ, телей, сунар, пĕлĕт, хĕвел, кун) тата а, э,ă,ĕ,у,ӳ,и сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. Падежсем. Хупă тата уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ

Саламламалли правилăсем

**Паллă ячĕ – 6 ч**

**Паллă ячĕсен** тĕп, танлаштаруллă тата вăйлă степенĕсем, вĕсемпе пуплевре усă курасси. Паллă ячĕсем –ак/-ек, -ăк/-ĕк, -кăн/-кĕн, -чăн/-чĕн, -лă/-лĕ аффиксем хушăнса пулни.

Паллă ячĕсен пĕлтерĕшĕ, пулăвĕ

Паллă ячĕсен тĕ тата танлаштаруллă степенĕсем

Паллă ячĕсен вăйлă степенĕ

**Хисеп ячĕ - 3 ч**

Хисеп ячĕсен пĕлтерĕшĕ

Ĕç хучĕсем. Пĕлтерӳ çырасси

**Местоимени - 4 ч**

**Сăпат ылмашĕсене** текстра тупасси, вĕсем хăш падежрине палăртасси.

Местоимени пĕлтерĕшĕ. Сăпат местоименйĕсем

Уяв ячĕпе саламласси

**Глагол - 17 ч**

**Глагол** вăхăт, сăпат тата хисеп тăрăх улшăнни. Унăн пурлă тата çуклă формисем.

Глагол вăхăт тăрăх улшăнни. Хальхи, иртни,пулас вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ.

Глагол çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни

**Вĕренӳ çулĕнче ăса хывнине аса илесси - 4 ч**

Сăмах тытăмĕ тата пулăмĕ. Текст. Предложени. Пуплев пайĕсем.

Вĕренекенсен пĕлĕвне тĕрĕслени. Пĕтĕмлетӳ урокĕ

**Чĕлхене ансат тишкересси. Чĕлхе пĕлĕвĕн терминĕсемпе паллаштарасси**

**Çыхăнуллă пуплев**. Текст. Унăн темипе тĕп шухăшĕ. Текст тытăмĕ (композици)

Изложенипе сочинени планĕсене ушкăнпа тата пĕччен тăвасси. Планпа усă курса 80-90 сăмахлă текст тăрăх тулли е кĕске изложени çырасси.

Пурнăçра пулса иртнĕ пĕр-пĕр ĕç (курни-илтни, сăнани, экскурсире пулни, театра кайни, сумлă çынсемпе тĕл пулни) çинчен ушкăнпа хатĕрленнĕ хыççăн пĕчĕк ăслав (сочинени) хайласси.

**Пуплев этикечĕ**. Каланине хирĕçлесси: вашаватлăх тата тӳрккеслĕх. Каçару ыйтассине, ӳкĕнĕве палăртасси, ашшĕ- амăшне, тус-тăвана уяв ячĕпе саламласси.

**Ĕç хучĕсем**. Шкулти хаçатпа, Шупашкарта тухса тăракан ача-пăча хаçат-журналĕпе çыхăну тытма хистесси. Пĕлтерӳ çырма хăнăхтарасси.

**Сăмах йышне** ӳстересси, унпа усă курма пĕлнине çирĕплетесси. Сăмахсене тĕрлĕ мелпе ушкăнласси.

**Орфографи тата орфоэпи**. Мăшăр сăмахсене çырасси: сĕтел-пукан, сĕт-çу.

Икĕ хут калакан сăмахсене çырасси: ял-ял, хĕрлĕ-хĕрлĕ, пин-пин.

**Сăпат ылмашĕсене** тĕрĕс каласси, çырасси: эпĕ (эп), эсĕ (эс), эпир(эпĕр), эсир (эсĕр); манăн (ман), санăн (сан); манра, манран, санра, санран, пирĕнте (пирте), сирĕнтен (сиртен); вăл – унăн, ăна, унран.

Япала ячĕсен падеж формисене тĕрĕс каласси, çырасси: çыру- çырăвăн, çырăва; сăвă- сăввăн, сăвва; пĕрчĕ – пĕрчĕн, пĕрче; мăкăнь – мăкăньте е мăкăньре; район – районта е районра.

Глаголăн çак формисене тĕрĕс каласси, çырасси:

1)Хальхи вăхăтăн сăпат формисене (çыратăп – çырмастăп, çыратăн – çырмастăн (çырап – çырмап, çыран мар, ташлатпăр – ташламастпăр, ĕçлетпĕр – ĕçлеместпĕр, вулатпăр – вуламастпăр, вĕренетпĕр – вĕренместпĕр, ташлатăр – ташламастăр, ĕçлетĕр – ĕçлеместĕр, вĕренетĕр – вĕренместĕр, килетĕр – килместĕр, çырать – çырмасть (çырат – çырмас мар);

2)Пулас вăхăт формисене (ту – тăвăп, тăвăн, тăвĕ; çи – çийĕн, çийĕп, çийĕ);

3)Р сасăпа пĕтекен йĕр, кĕр, кӳр, пар, пер, пыр, тăр, хур, яр глаголсен иртнĕ вăхăт формисене: кĕтĕм, кĕтĕн, кĕчĕ, кĕтĕмĕр р сасă тухса ӳкет).

Çемçе л, н, т сасăсемпе пĕтекен сăмах тĕпĕ çумне –лă/-лĕ аффикс хушăнса пулнă сăмахсенче ь çырасси: кукăльлĕ, супăньлĕ, тетрадьлĕ, медальлĕ, портфельлĕ.

Паллă ячĕсен вăйлă степенĕнче ( хуп-хура, тӳп-тӳрĕ, ем-ешĕл, çап-çутă, сап-сарă, кăн-кăвак) дефис лартасси.

**Пунктуаци.** Пĕр йышши членлă предложенисенче хӳреллĕ пăнчă лартасси.

**Таса та илемлĕ çырасси**

Графика хăнăхăвĕсене малалла аталантарса пырасси. Сăмахсемпе предложенисене хăвăртрах çырма хăнăхтарасси. (Кирлĕ сăмахсемпе предложенисене учитель хăй суйласа илет.)

**Харкамлăх результачĕсем:**

**Вĕренекенсен  çакна пĕлмелле:**

- тăван чĕлхене хаклама, хисеплеме хăнăхса пыни;
- кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи, вăл ыттисенчен уйрăлса тănине ăнланни;
- чĕлхепе кăсăкланма пуçлани, харпăр хăй пуплевне лайăхлатас кăмăл-туйăм амаланни

**Пур предмета та вĕрентнĕ май кĕтекен результатсем:**

**Вĕренекенсен  çакна пĕлмелле.**

- пулăмсене тарăнрах ăнланма вĕренсе пыни
- ăнлавсене уçăмлама, ушкăнлама хăнăхса пыни
- тишкерӳ-пĕтĕçтерӳ, танлаштару хăнхĕвĕсем çирĕпленсе пыни

**Вĕренекенĕн çакна тума пултармалла:**

-вĕреннĕ орфограммăсенчен тăракан 55-60 сăмахлă текста йăнăшсăр, таса та илемлĕ çырса илме, диктант çырма;

-пĕр йышши членлă предложенире (вĕреннĕ тĕслĕхсем) чарăну паллисем лартма;

н сасăпа саспалли тытăмне тишкерме, тымарĕпе аффиксĕсене тупма;

- япала ячĕсен, сăпат ылмашĕсен падежĕпе хисепне, глаголсен хисепне, сăпачĕпе вăхăтне палăртма;

**Предметăн пулас результачĕсем:**

**Пĕлӳлĕх(познавательные) результачĕсем:**

- çырнă чух мĕнле лармаллине тата çыру хатĕрĕсемпе мĕнле усă курмаллине пĕлни;
- таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтăлав аталанни;
- таврари япаласемпе пулăмсем çинчен мĕн пĕлнине системăлани: «Тăван çĕр-шыв» ăнлава уçăмлани. Вăл çуралнă вырăн, тăван ял, тавралăх, хăй пурăнакан республика тата çĕр-шыв (Раççей) пулнине ăнланни, унăн культури, мухтавлă çыннисем çинчен пĕлни; çут çанталăк законĕсем, япаласемпе пулăмсем пĕр-пĕринпе çыхăнса аталаннине курни;
- тавралăх енĕсене, япалан вырăнне кăтартма, тавралăхри вырăнне палăртма пĕлни;
- япаласен пĕрпеклĕхне, уйрăмлăхне, вĕсем мĕнпе уйрăлса тăнине курма, палăртма пултарайни;
- ачан тавракурăмĕ анлăланни, çут çанталăкри пулăмсем, çулталăк вăхăчĕсем, çемье, чĕр чунсем, ачасен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлни, тĕнче курăмĕ йĕркеленсе пыни;
- туйăм культури çивĕчленни, кирлĕ вăхăтра пулăшма, мĕн тумалла, мĕнле тумаллине тавçăра пуçлани;

-пысăк, пĕчĕк, тан уçлăха курни, логикăллă шайлаштарайни;
- вĕренӳ хатĕрĕсенче кирлĕ материала шыраса тупма пĕлни;
- вĕренӳ хатĕрĕсенче панă символсене, модельсене, схемăсене,паллăсене ăнланни;

**Йĕркелӳ-хаклав(регулятивные) результачĕсем:**

- тантăшĕсен тата харпăр хăй ĕçне тишкерейни тата пахалайни;
- тишкерӳ - пĕтĕçтерӳ ĕçне хăнăхни, пĕтĕмĕшлине пайсем çине уйăрма, пайĕсене пĕтĕçтерме пĕлни;
- тĕрĕс курма, япаласен уçлăхри вырăнне палăртма пултарни;
- хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышăнни;
- вĕрентекен, класпа пĕрле палăртнă задачăна татса памалли тĕрлĕ майсем тупни;
- хăвăн шухăшна ăнлантарса парайни;
- йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
- ĕç йĕркине, мĕн хыççăн мĕн тумаллине, мĕншĕн ун пек тумаллине тавçăрни;
- ĕçĕн кашни тапхăрне вĕрентекен пулăшнипе хак парса пырайни;
- харпăр хăй ĕçне планлама пĕлни.

**Хутшăну(коммуникативные) результачĕсем:**

- шухăша тĕрĕс те уçăмлă, çыхăнуллă каласа пама тăрăшни;
- текстпа ĕçлеме пĕлни, вулани çинчен çыхăнуллă тата уçăмлă каласа пама тăрăшни;
- ачан пуплевĕ, йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
-пуплев культури аталанни: пĕр-пĕр япала, пулăм, ĕç çинчен çыхăнуллă, кирлĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама пултарни; юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мĕн çинчен тата мĕнле сăмахсемпе усă курса калаçмаллине ăнкарни, кампа калаçнă чух, хăçан, мĕнле сăмахсемпе (сывлăх сунни, тав туни, сывпулашни) усă курмаллине тавçăрни;
- çывăх, хирĕçле, пĕр пĕлтерĕшлĕ, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕсрех, тарăнрах ăнланни, вĕсен ретĕнче кирлине суйлайни;
- сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшне ăнланни;
- чăваш чĕлхинче сăмахсен предложенире çирĕп йĕрке пуррине ăнланни, ăна пуплевре тытса пырайни;
- каласа парассин тĕрлĕ тĕсĕсене (калав, сăнлав, уйлав) пĕлни. Вĕсен тытăмĕпе уйрăмлăхĕсене курма, калавăн тĕрлĕ тĕсне йĕркелеме пултарайни;
- калав темине, тĕп шухăшне палăртайни;
- хутшăну пуплев\ (диалог) тытăмне, унти предложенисен хăй евĕрлĕхне (ытларах тулли мар предложенисем) пĕлни. Диалог шалашĕ пĕр темăна, пĕр тĕп шухăша пăхăнса тăнине ăнланни. Майĕпен хутшăну пуплевне тĕрлĕ пуплев ситуацийĕсенче усă курма пултарни;
- ушкăнпа ĕçлеме пĕлни;
- сăмах йышĕ пуянланни;

- çынсем тĕрлĕрен шухăшлама пултарнине ăнланни.
Ача пуплевĕнчи тĕп ĕç - хĕлсене( тăнлассине, калаçассине, вулассине, çырассине) аталантарса пынипе пĕрлех тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух çак тĕллевсене пурнăçламалла:
Вĕрентекенсен çынлăх туйăмĕсене вăйлатмалла, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хăйсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;
Ачасем таврари пурнăç, этемпе çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;
Ачасен çыхăнуллă тата сăнарлă шухăшлăвĕпе асне, асăмлас хевтине аталантармалла;
Вĕренӳ ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унăн ăслайĕсене «алла илме» май туса памалла; вĕренӳ вăхăчĕпе перекетлĕ усă курма, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелĕсене чухлама вĕрентмелле;
Тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, пĕлӳпе пурнăç тĕслĕхĕсен çăл куçĕпе – кĕнекепе кăсăкланма хăнăхтармалла.
**Предметăн пайрам результачĕсем:**
**Вĕренекен çакна пĕлмелле:**
- тăван чĕлхери тĕп сасăсене, вĕсене палăртмалли саспаллисене, сăмахри сасăсен пахалăхне (уçă е хупă), йĕркине хытă тата çемсе сасăсене сăмахра паллама, сырура палăртма пĕлни;
- сăмахсене: предложенисене: пысăк мар тĕрлĕжанрлăтекстсене вуласа ăнланма пултарни;
- пур сасăпуххи сăмах: сăмах пуххи предложени пулайманнине ăнланни;
- сас паллисене (пĕчĕккисене тата пысăккисене), вĕсен çыхăнăвĕсене, сăмахсене, предложенисене тĕрĕс евĕрлесе сырса илме, тĕрĕслеме вĕренни;
- уйрăм сăмахсене: 3-4 сăмахран тăракан, тытăмĕпе ансат предложенисене илтнĕ тăрăх сырма пултарни;
- чĕлхе пĕлĕвĕн хăш-пĕр ансат ăнлавĕсемпе терминĕсене (усăе хупă сасă: сас пали, сыпăк, сăмах, предложении, текст) усăмлани.
**Харкам результачĕсем:**
- ачасем хăйсем вĕренекен пулнине ăнланни: вĕренекенĕн яваплăхĕсене усăмлани;
- ачасем тăван сĕршыв: тăван халăх: тăван чĕлхе ăнлавсене ăша хывни: хăйсем хăш халăх ывăл-хĕрĕ пулнине ăнланни: вĕсен тăван халăха хисеплес туйăм амаланма пуслани;
- ачасем таврари пурнăс: этем: сут санталăк синчен мĕн пĕлнине анлăлатни, тавракурăмĕ йĕркелесе пыни;
- харпăр хăйĕн тата тантăшĕсен ĕç-хĕлне санас-хаклас ăслай-хăнăхусене алла илсе пыни.
**Пур предметсене вĕрентнĕ май кĕтекен результатсем:**

